# Петĕр Яккусен: «Пурнăçăма сăввăмсемпе илемлетрĕм...»



**Тĕлĕнмелле çын вăл – поэт. Пирĕн хушăрах пурăнать, эпир çӳрекен çулсемпех утать, хамăр чĕлхепех калаçать, пирĕн пекех ĕçе çӳрет, ачи-пăчине ӳстерет... Çав вăхăтрах вăл эпир курманнине курма, илтменнине илтме, туйманнине туйма пултарать. Ку çеç-и – çакна пĕтĕмпех хăйне май ăсласа, сăнарласа йĕркен-йĕркен шурă хут çине кăларать; вулакан патне çитерет. Мĕнре-ха çак феномен вăрттăнлăхĕ? Хуравĕ паллă: чăн-чăн поэтăн чунĕнче – тĕлĕнмелле илемлĕ те пуян тĕнче. Теприсем Тур пани вăл теççĕ. Кунпа тавлашмăпăр – унсăр мар паллах. Анчах та çӳлтен панине аталантармалла-çке. Çакă вара пĕр вĕçĕм туса пымалли çав тери кăткăс ĕç.**

**Акă Петĕр Яккусен сăвăçах илер. Кашни чăваш ачи пекех, вăл пĕчĕк чух çурхи кунсене тăм тăвайккинче выляса кĕтсе илнĕ, ӳсерехпе уй варринче чунĕпе тасалнă, çирĕпленнĕ, ĕçре пиçĕхнĕ, çавра кӳлĕ хĕрринче шухăша кайса пурнăç тупсăмне шыранă. Анчах вăл ăнланнă пек эпир юман чĕлхине тĕшмĕртейместпĕр, кĕмĕл кимĕпе те ярăнаймастпăр. Мĕн тăвăн, поэзин шерпетне тутанса пăхас текенсем нумай – унăн техĕмне пурте туймаççĕ.**

**Кăçал çурла уйăхĕн 26-мĕшĕнче пирĕн юратнă сăвăç, хисеплĕ тĕпчевçĕ Петр Яковлевич Яковлев 70 çул тултарать. Поэзие кăмăллакансем Красноармейски районĕнчи Упаçырминче çуралнă ăста çыравçăн пултарулăхне аван пĕлеççĕ.**

**Çак пурнăç – тĕркĕшӳллĕ цирк-им?**
**Поэт – сăмах жонглерĕ-им вара?**
**Сире валли сăмах эп илсе килтĕм**
**Шанса тăрса хитре кăмăлăра. <...>**
**Илем тени пурах чунра пурин те,**
**Ун çутине сӳнмешкĕн парас мар.**
**Сире валли сăмах эп илсе килтĕм**
**Чуна уçса ăшпиллĕн калаçма, –**

**çунатлă пулса тăнă çак йĕркесемпе тăватă теçетке çул каялла вăл чăваш литературине килсе кĕчĕ. Паллах, чуна уçса калаçасси пурин те пулмасть, унăн вара пулчĕ темелле: Петĕр Яккусен хăй вулаканне тупрĕ. Ун поэзи çăлкуçĕн тăрă та сиплĕ шывне тутанса пăхас текенсем йышлансах пыраççĕ.**

**Утса тухнă кун-çулĕ тата пултарулăхĕ çинчен калаçма Петр Яковлевич Яковлева редакци тĕпелне чĕнтĕмĕр.**

***– Мĕншĕнне пĕлместĕп, тен, хам ватăлса пынăран, мана юлашки вăхăтра çулланнă çынсемпе хутшăнма кăсăклăрах та, çăмăлрах та. Вĕсем шухăшне тĕплĕн çавăрса, кашни сăмахне виçсе лăпкăн калаçнине итлеме кăмăллă: чунпа канатăн, ăспа пуятăн. Уйрăмах ватăсенчи виçелĕх туйăмĕ килĕшет. Виçине пур ĕçре те пĕлмелле, поэзире пушшех те. Çапла мар-и, Петр Яковлевич?***

– Паллах. Уйрăмах чĕлхе тĕлĕшĕнчен виçе пулмалла. Хăш-пĕр сăвăçсем тăватă йĕркерен тăракан сăвăра тăватă архаизм, тăватă неологизм чыхса лартаççĕ. Вулатăн та – поэзи хистенипе мар, курăр-ха, епле эпĕ чăвашла чаплă пĕлетĕп, эсир, айвансем, эп çырнине ăнланмастăр та тесе мухтаннăн туйăнать. Тăван чĕлхемĕре пуянлатас тетпĕр пулсан ăна питĕ асăрханса, виçине пĕлсе тумалла.

Хăй вăхăтĕнче «художественная литература» тенине чăвашла «илемлĕ литература» тесе палăртнă. Мана çакă питĕ килĕшет. Илем картинчен тухас марччĕ, чăваш литератури илемлех пултăрччĕ. Тĕнчи пăтранать кăна, малти вырăна усаллăха мухтасси, сылăх пылакне тутантарасси тухса пырать. Ман шутпа, шăпах хальхи пек пăтрашуллă саманара Таса Сăмах культурине упраса хăварма тăрăшмалла. Çакă пулать те тăван чĕлхемĕре пуянлатни. Эп калани йывăр темăсенчен, чуна çунтаракан ыйтусенчен пăрăнмалла тенине пĕлтермест паллах.

***– «Сын чунĕ кĕрĕк çанни мар – тавăрса пăхаймăн», – тет чăваш. Поэт вара ятарласа тенĕ пек хăй чунне «тавăрать» – урăхла май çук, жанрĕ çавна ыйтать. Чунра пуррине шурă хут çине, пурин умне те кăларма Сире мĕн хистет? Хăратмасть-и?***

– Ку ыйту питĕ кăсăклă. Уйрăмах «хăратмасть-и?» тени. Поэт-лирик хăй чунне уçса парать пулсан, çакна вăл хăйшĕн мар, ыттисемшĕн тăвать, мĕншĕн тесен вулакан вăл е ку хайлавра хăй чунĕпе шайлашăнса тăракан туйăмсене, пулăмсене, сăнарсене шырать. Урăхла пулма та пултараймасть. Анчах та çакна шута илмелле: сăвă авторĕ лирика геройĕпе нихăçан та тӳр килмест. Литература тĕпчевçисемшĕн ку тахçанах паллă аксиома. Çавăнпа та, калăпăр, Афанасий Фет чи черченкĕ те çепĕç вырăс поэчĕ тени вăл пурнăçра та çавнашкалах пулнă тенине пĕлтермест. Пурте пĕлеççĕ: пурнăçра вăл çирĕп те хаяр çын пулнă. Е, калăпăр, манăн пултарулăхра пĕчченлĕх е пĕччеңçĕлĕх теми самаях анлă. Ку ĕнтĕ лирика геройĕн хăйне евĕрлĕхĕ. Чăн пурнăçра вара эпĕ яланах е салтакра, е шкулта, е кунĕн-çĕрĕн студентсемпе пулнă. Çав пĕччеңлĕх теми сиксе тухни хальхи цивилизаци палăрăмĕ пулас. Тата çав пĕччеңлĕх вăл – пултарулăх çыннин пĕччеңлĕхĕ, ăс-хакăлпа чун-чĕм уйрăмлăхĕ. Унсăрăн нимĕнле пултарулăх та пулмасть. Пĕтĕмлетсе каласан, вулакан лирика геройĕн сăнарĕнче хăйне шырать. Эпĕ хам та çав «туйăмсен тӳр килĕвне» пин-пин хут чĕре витĕр кăлар-

нă. Çамрăк чух, Сергей Есенинпа аташсах кайнă чух, чун пĕр кĕвĕлĕхне туйнипе куççуль те кăларкаланă.

Çак эпĕ калани, паллах, поэзине кăна пырса тивмест, пĕрешкел туйăмлă, пĕрешкел шухăшлă çынсене ширани вăл ÿнерĕн чи вăйлă палăрăмĕ. Чи чапли вара кунта – вăхăт тата талккăш тулашĕнче пулма май килни. Тĕслĕхрен, эпĕ икĕ пин çул каялла пурăннă пĕр-пĕр грек поэчĕн хайлавĕпе каçăхса кайсах хавхаланма пултаратăп. Çакă мар-и вара вăл литературăн асамлăхĕ, вăрттăнлăхĕ? Тата Библин «Çĕнĕ Халал» кĕнекисене куçарнă хыççăн çакна ăнланса илтĕм: икĕ пин çул хушшинче çын улшăнманпа пĕрех, сăвапĕсемпе çылăхĕсем епле пулнă, çаплипех. Пире вара, «коммунизм строителĕсене», пĕр ĕмĕртех çынна улăштарма пулать тесе вĕрентнĕ.

Чуна уçма хăрасси пирки вара çакна каламалла. Чăваш культури вăл хупăнчăк культура, чăваш менталитечĕ çавнашкал. Ман шутпа, çак психика уйрăмлăхĕ финн-угрсен пĕр пайĕ чăвашсем йышне кĕнипе çыхăннă. Çав хупăнчăклăх финн-угр халăхĕсен тата та вăйлăрах палăрать. Гуманитари институчĕ Атăлçи халăхĕсен менталитечĕ пирки пысăк конференци ирттерчĕ, мĕн тери кăсăк пулчĕ мари, мордва, удмурт халăхĕсем хăйсен наци менталитечĕ пирки тухса калаçнисене итлесе ларма! Вĕсен хупăнчăклăхĕ чăвашсенчен те вăйлăрах.

Лирика вăл уйрăм çыннăн кăмăл-туйăмне палăртни. Йышпа, тăван-пĕтенпе, ялпа пурăннă халăхшăн уйрăм çын интересĕсем нихăçан та малти вырăнта пулман. Хальхи саманара вара, чăвашсенчен ытларахăшĕ хуласенче пурăннă чухне, уйрăм çын кăмăл-туйăмне палăртни кирлĕрех. Чăваш поэзийĕ пуян пулин те, эпир чаплă поэт-лириксемпе мухтанма пултараймастпăр. Паллах, лирикăлла сăвăсем çырса пăхман поэт çук та пулĕ, калаçу кунта çав жанрпа кăна ĕçлени пирки. Вăрçăччен, калăпăр, пирĕн питĕ çепĕç Иван Ивник пулнă. Вăл çурални 100 çул çитнине халалласа Надежда Ильина пархатарлă ĕç турĕ: архивра упранакан тата пичетленнĕ сăввисене пухса «Сывлăм йĕрĕ юлчĕ çырура» (Шупашкар, 2014) ятлă кĕнеке пухса кăларчĕ.

***– Сирĕн сăвăсен тематики анлă. Çамрăк чух мĕн пăлхантарнă чунăра? Каярахпа? Халĕ мĕн канăç памасть?***

– Кашни çын пекех, поэт та пурнăç вутĕнче çунать, çапла майпа пурнăç опычĕ туптанать, тĕнче курăм анлăланать. Хама илес пулсан, çĕр çине эпĕ романтик пулса çуралнă. Романтиксем вара питĕ пысăк хирĕçÿ умĕнче тăраççĕ: пĕр енче – тĕнче илемĕ, асамĕ, вăрттăнлăхĕ; тепĕр енче киревсĕрлĕх, пушă хĕвĕшÿлĕх, усаллăх. Ĕмĕрĕм те, пултарулăхăм та çак икĕ вут хушшинче çунсах иртсе кайрĕ пулмалла. Кăна эпĕ халĕ, ватăлсан, каялла çаврăнса пăхсан, тишкерме хăтланатăп. Çамрăк чухне, вăйпитти чухне ун çинчен шухăшламан паллах. Пурăннă та пурăннă, савăннă та тарăхнă. Анчах хальхи куçпа пăхсан тĕп темăсем çаксем пулас: çут тĕнче асамлăхĕ, пурнăç кĕтречĕ, сăмах хăвачĕ, ырăпа усал кĕрешĕвĕ, йĕри-таврари тĕрĕсмарлăх, çынсем илеме хисепе хуманни, тăван ялпа тăван халăх çуллен йăшса пыни. Çав хушăрах – йывăрлăхсене çĕнтерсе – пурăнасшăн, ырă ĕç туса хăварасшăн тапаланни.

Чăн та, сăввăмсенче юрату лирики сахал. Ку икĕ сăлтавран килет пуль: пĕрремĕшĕ – массăллă культурăра çав тема кăна хуçаланни, иккĕмĕшĕ – çын хăйĕн пурнăçĕнче юратăвне тупнă пулсан ăна сăмахпа çырса кăтартни кирлĕ те марри. Тĕнче поэзийĕнче чи хăватлă юрату лирики тăтăшах икĕ çын пĕр-пĕринпе пулма пултарайманнипе, пĕр-пĕрин патне ăнтăлнипе çыхăннă (аса илĕр-ха Петрарка сонечĕсене!). Юратакан çынсем пĕрле пулсан вара – сăмах ытлашши пулса тухать, мĕншĕн тесен чăн-чăн юрату вăл хăй поэзи…

***– «Уй варринче», «Çавра кÿлĕ», «Юман чĕлхи»… Эсир çырнă кĕнекесен ячĕсене асăнатăп та тÿрех куç умне фольклорти сăнарсем тухаççĕ. Халăх сăмахлăхĕ Сирĕн пултарулăха мĕн тери витĕм кÿнĕ?***

– Халăх сăмахлăхĕ – чăваш халăхĕн тĕлĕнмелле чаплă пуянлăхĕ. Эпир ăна чĕрĕ халлĕн курса-илтсе юлма ĕлкĕртĕмĕр. Пĕр венгр тĕпчевçи чăвашсем пирки çапла çырнăччĕ: «Эсир ылтăн çинче утса çÿретĕр…». Мĕншĕн-ха? Мĕншĕн тесен чылай халăхăн (уйрăмах Европа çыннисен) чĕрĕ фольклор пурнăçра çук ĕнтĕ, Çавăнпа та ку таранччен мĕн çырса юлма ĕлкĕрнине том хыççăн том кăларса Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ питĕ паха ĕç тăвать. Паллах, кирек епле ĕç тусассăн та тиркекен тупăнатех. Ун пек чухне эпĕ яланах çапла калатăп: «Кам чарать, тыт та ху ту!»

Хамăн пултарулăх пирки калас пулсан, халăх сăмахлăхĕн витĕмĕ тесех калаймăп, мĕншĕн тесен нихăçан та фольклорти çак сăнарсемпе, çак сăмахсемпе усă курам-ха тесе сăвăсем «ăсталаман». Сăввăмсенче мĕн пурри – мифологиллĕ шухăшлав палăрăмĕ. Эпĕ мĕн пĕчĕкрен чĕрĕ йăла-йĕркене курса-илтсе, ăша хывса ÿснĕ. Ача çурални, вăййи-кулли, улах, салтак, туй, çĕн пÿрт ĕçки, юлашки çула ăсатни… Хуткупăс калама вĕреннĕччĕ те – купăссăсем çукран тăххăрмĕш класранах туйсене сĕтĕрме пуçларĕç…

Çапла ĕнтĕ, ку пулăма халăх сăмахлăхĕпе усă курни тесе хаклама çук, ку – ăшри-юнри. Мĕншĕн-ха мифологиллĕ шухăшлав терĕм? Мĕншĕн тесен пултарулăх çыннин шухăшлавĕ мифологиллĕ кăна пулма пултарать. Сĕм авалхи çынсен çавнашкал шухăшлав кăна пулнă, каярахпа вара этем ăс-хакăл шухăшлавне аталантарнă. Ăс-хакăл шухăшлавĕ кăна хуçалансан тĕнче пĕр пĕтĕмлĕхĕ арканса, вакланса каять, пурнăç тĕллевĕ çухалать (çакна эпир хальхи цивилизацие сăнасан аванах куратпăр). Çавăнпа та пултарулăх çыннисем (поэтсемпе композиторсем, çыравçăсемпе ÿкерÿçĕсем) – пĕр пĕтĕмлĕхе упракансем – питех те кирлĕ. Шел, çакна ăнланакан сахал.

Тата çакна палăртса хăвармалла: сăнарĕ-символĕсем сĕм авалтан килеççĕ пулин те, эпĕ сăввăмсенче аваллăха нихăçан та идеализацилемен, ĕлĕкхи пурнăçпа киленсе, архаика илемĕпе канăçса ларман, фольклор символĕсем ăшне хальхи пурнăç чĕрĕлĕхне вĕрсе кĕртнĕ. Мĕн пулса тухнă – ăна вулакан кăна хак пама пултарать.

Хальхи çамрăк çыравçăсене мĕн каланă пулăттăм? Халăх сăмахлăхне кĕнеке урлă та пулин ăша хывма тăрăшăр, вĕренмелли унта – вĕççĕр-хĕрсĕр. Ахаль ташă такмакнех чăваш тÿпе таран çĕклет:

Çÿлте çăлтăр пит нумай та –
Пĕлĕт авăнса тăрать…

Кам та пулин çакнашкал икĕ йĕрке çырма пул-



*Л. Мартьянова, М. Карягина, О. Кульев, П. Яковлев Шупашкарта Наци библиотекинче Раççей поэзийĕн антологине хăтланă хыççăн. 2017 çул*

тарайсан эпĕ ăна тӳрех поэт тесе каланă пулăттăм.

***– Сирĕн поэзи афоризмĕсем хушшинче çакăн пекки пур:***

**Поэзирен чăнрах тĕнче**
**Эп тупаймарăм çĕр çинче.**

***Мĕнре-ши вăл поэзи чăнлăхĕ? Проза, драма чĕлхисемпе çырнисенче чăнлăх сахалрах-ши?***

– Ку йĕркесенче жанрсен хирĕçлевĕ çук. Хам сăвăç пулнăран, хамăн шыравлă пурнăçра поэзире кăна чăнлăх тупнăран çапла çыраннă йĕркесем… Кирек епле çын та пурнăç тупсăмĕ çинчен шухăшлатех пуль тетĕп. Тата çак тĕрексĕр саманара тĕрексем шырать. Пултарулăх çынни вара – çак шырава пурнăç тĕллевĕ туса хурать. Поэт ку ыйтуран, паллах, пăранаймасть. Шухăшласа пăхăр-ха: пуранна чухне поэта чылай чухне çын выраннех те хурса каймаççĕ. Ака вун тăххармĕш ĕмĕрех илер. Мĕн чухлĕ патша-улпут таврашĕ, мĕн чухлĕ пуян пуранна вăл ĕмĕрте. Пĕр-ик ĕмĕр иртет те, «Сирĕн, вырăссен, вун тăххăрмĕш ĕмĕрте нимĕн те пулман» тесессĕн: «Мĕнле пулман? Пушкин пулнă! Лермонтов пулнă!» – тавăраççĕ тарăхса та мухтанса. Чăвашăн та çавах: «Пирĕн Константин Ивановпа Çеçпĕл пур, Хусанкайпа Ухсай пур», – тетпĕр. Ăçта патшасемпе пуянсем? Ăçта поэтсене сума суманнисем? Халăх хăйĕн чăн-чăн поэчĕсене илнĕ те малалла кайнă, апла пулсан çав поэтсем пурнăç чăнлăхне палăртма пултарнă.

Эсир çӳлерех илсе панă йĕркесенче çак шухăша кăна каланă.

***– Кашни ĕçĕн хăйĕн вăрттăнлăхĕсем пур. Сăвă мĕнле çыранни çинчен ыйтсан хăш поэт йĕркесем хăйсемех космосран юхса килеççĕ тет; тепри пĕр вĕçĕм хăйĕн сăмах кушелĕнче «тустарать», кирлине шырать, çырнине чутлать, якатать иккен. Хăшĕ-пĕри вара, ман шутпа, ăсне те, чунне те ытлашши асаплантармасăр сăввисене кун кĕнеки çырса пынă пек хайлать… Сирĕн сăвăсем епле çуралаççĕ? Çырăнман тапхăрсем пулаççĕ-и? Çака мĕнрен килет?***

– Ку ыйтусем ытла та анлă, кĕнеке çырмалăх та пур. Кĕскен, сăвăçла сăнарлăн каласан, пĕтĕмпех поэт чунĕ ăçта шăтса тухнинчен килет. Халăх вăл – вăрман. Пĕр сăвăçи, ав, вăрман варринче шăтса тухнă та ытти йывăççемпе пĕрле кашласа ларать: ăвăс вăрманĕ çинчен, юнашар йывăççи тымарĕсемпе вăл ĕмес сĕткене ĕмсе ларни çинчен, кăшт çӳлерехри ăвăсĕ унран хĕвеле хуплани çинчен тата юнашар йăрăс пӳллĕ йывăçа савма пуçлани çинчен… Çапах та ытти йывăççемпе пĕрле савăнăçлă, хӳтлĕхлĕ. Вăрман ун юррине итлеме юратать, чисти чăн пурнăçри пекех теççĕ итлекенсем… Эпĕ унашкал сăвăççене реалистсем тетĕп: мĕн кураççĕ, çавăн çинчен шăрçалаççĕ, кĕскен каласан, публицистика хуçаланать. Мĕншĕн сăвалаççĕ – эпĕ ăнлансах каймастăп, мĕншĕн тесен вăл сăвăсене прозăпа та çырма пулать. Сăвă çыракансен 90 проценчĕ çапларах пуль.

Тепри тата вăрманпа юнашар шăтса тухнă. Ăна çил те туллать, шартлама та касать, анчах вăл вăрмана катаран курать те – чунĕ ыратать: ахрат çырми çурса килет, йывăççем тĕпсĕрлĕхе чăмаççĕ. Чи интересли – ку пачах та ăвăс вăрманĕ мар, хутăш вăрман. Ăвăссем ӳсекен вырăнĕ те пĕр лаптăк кăна – вăт сана реализм! Романтиксем те, ман шутпа, çак ушкăна кĕреççĕ. Вĕсем вăрманта пулайманнишĕн кулянаççĕ, çав хушăрах ирĕклĕхпе, пĕчченлĕхпе киленеççĕ, вăрманне аякран курнипе тĕрĕсрех хак параççĕ.

Виççĕмĕшĕ вара уй варрине шăтса тухнă. Нимле вăрман та курăнмасть. Вăл çĕрле çăлтăрсемпе калаçать, кăнтăрла çил варкăшĕпе йăпанать. Ку ĕнтĕ киремет йывăççи, тухату йывăççи. Вăл хăй ĕмĕт-шухăшĕсенче, тĕлĕкĕсенче пурăнать, çут çанталăка туллин курса хаклать. Вăрмансемпе хирсем çинчен ăна тӳпе пĕлтерет, тӳпе пĕлĕвĕ вара – чи тĕрĕсси. Анчах та çав пĕлӳшĕн, пророкла калама пултарнишĕн тӳлес пулать: унăн сăмахĕсене вăрман йышăнмасть, йышăнсан та – чылай вăхăт иртсен. Шартлама касать, аçа та çапса çунтарса ярать, вăл каллех хунав кăларать… Кунашкал поэтсем ĕмĕрте пĕрре пулаççĕ, чăвашсен Çеçпĕлĕ пек.

Поэзине ытла ансат ушкăнлатăн тесе мана литераторсем каллех вăрçаççĕ ĕнтĕ.

Сирĕн ыйтăва туллин хуравласа тата çакна каламалла: эпĕ хавхалану саманчĕсенче кăна çырнă. Ăçтан килеççĕ сăвă йĕркисем – эпĕ ăна калама пултараймастăп. Пĕр-пĕр композиторăн, ав, чунĕнче музыка илтĕнет. Вырăсла ăна «подсознание» теççĕ те, çавă пуль. Чăвашла ку термина В.Г. Родионов «ăн айĕ, ăнай» тесе куçарнăччĕ.

***– Сирĕн поэзи пуххисене уçкаланă май çакна асăрхарăм: маларах тухнисенче сăвăсене ят парса тухнă, каярах çырнисен ячĕ çукпа пĕрех. Çакă мĕнпе çыхăннă-ши?***

– Кахал пулнипе пуль. *(Кулать.)* Ку пĕлтерĕшлĕ ыйтăвах мар. Хăйне евĕрлĕ мода пекки кăна. Халĕ вырăс поэзийĕнче те, тĕнче поэзийĕнче те сăвăсене малтанхи йĕркепе палăртасси йăлана кĕнĕ.

***– Кашни чĕлхен хăйĕн кĕвви. Сирĕн пултарулăха тимлĕн сăнакан ҫакна та асăрхать: ют чĕлхерен кĕнĕ сăмахсемпе Эсир сăвăсенче питĕ асăрханса, типтерлĕн усă куратăр – хайлав кĕвĕлĕхне пăсас мар тесе. Кун пирки мĕн каланă пулăттăр?***

– Совет Союзĕ вăхăтĕнчи асăма килчĕ. Мускаврă, писательсен съездĕнче ҫурҫĕр халăхĕсен ҫыравҫи чĕлхе функцийĕсем ансăрланса, пĕтсе пынăран трибуна ҫинчен: «Пирĕн чĕлхепе халĕ сăвă кăна ҫырма пулать», – тесе ӳпкелешнĕ. Ун хыҫҫăн вырăс писателĕ тăнă та: «Эсир телейлĕ халăх, пирĕн чĕлхепе вара сăвă ҫырма та май ҫук, йăлт ют чĕлхерен йышăннă сăмахсемпе тултарса лартрĕҫ», – тенĕ. Пурте алă ҫупса янă вара.

«Поэт вăл чĕлхе управҫи», – тетчĕ Геннадий Айхи. Эпĕ анчах мар, чăваш сăвăҫисенчен ытларахăшĕ хăйсен пултарулăхне ют сăмахсене кĕртесшĕнех мар, чĕлхе тасалăхне упрама тăрăшаҫҫĕ. Тата, чăн та, поэзири кĕвĕлĕх ҫинчен калаҫатпăр пулсан, ют сăмахсем тăван кĕвве пăсаҫҫĕ.

***– Сăмах ăстисем, литература теоретикĕсем хушшинче «чăн-чăн поэзие урăх чĕлхене куҫарма ҫук» текен шухăш пур. Эсир ҫакăнпа килĕшетĕр-и? Сирĕн сăвăсене те ытти чĕлхесене куҫарнă тĕслĕхсем пур. Куҫару шайне мĕнле хаклатăр?***

– Шухăшĕ тĕрĕсех пуль-ха вăл, анчах пурнăҫри кирлĕлĕх куҫарттаратех. Куҫарусемсĕр тĕнчери халăхсем хушшинчи культурăри, литературăри хутшăнусем те, аталану та пулмĕччĕ. Паха куҫарусем вара вăл е ку литературăна ырă витĕм кӳреҫҫĕ, шайне хăпартаҫҫĕ. Чи лайăх вариант – Байрона вырăсла ун шайлă поэт куҫармалла теҫҫĕ. Байронпа пĕр шайлине ăстан тупмаллине кăна шарламаҫҫĕ. Ҫав хушăрах ҫак пархатарлă ĕҫе ҫиелтен, ҫăмăлттайла тунин сиенĕ те ҫук мар. Ку ыйтупа нумай калаҫма пултаратăп, университетра эпĕ фонетикăпа фонологи курсне кăна мар, куҫару теорийĕпе практики текен курса та вулаттăм.

Ман сăввăмсене тăвată-пилĕк поэт куҫарса пăхрĕ, куҫарăвĕсем хама ҫырлахтармарĕҫ. Пĕр сăмахпа каласан, хамăн куҫаруҫăна тупаймарăм. Тата питех ҫыраман та.

***– Пурнăҫ хирĕҫ тăрусенчен сыпăнса пырать. Сирĕн поэзире те тĕрлĕ пулăмсем, ăнлавсем час-часах пĕр-пĕринпе хирĕҫĕве, тавлашăва кĕреҫҫĕ. Калăпăр, «хула тата ял» проблема. Хула кроссворчĕн тупсăмĕсене, хăвăр пĕр сăвăри пек, шыраса хăшкăлниех Сире каялла, тăван яла, илсе ҫитерчĕ-и?***

– Эпĕ чăнласах ытлашши мăн хуласем (мегаполиссем) кирлĕ мар тесе шутлатăп, этем унта хăйне ҫӳпĕрен те пĕчĕкрех туять. Тата миллионлă хуласенче миллион урăх проблема тупăнать. Чи хăрушши – этем ҫут ҫанталăкран уйрăлса кайни. Шухăшласа пăхăр-ха: врачсем каланă тăрăх, халăхăн 40 проценчĕ ҫут ҫанталăкра пурăнаймасть – аллерги. Центрсем кăна мар, регионсем те пĕрешкелех аталанмалла тесе шутлатăп. Паллă ĕнтĕ, Раҫҫейри хуласене халăх ялтан куҫса пынă. Халĕ, ялĕсене пĕтерсен, урăх халăхсем, мигрантсем куҫаҫҫĕ, ку вара этнос тытăмĕ улшăнасси патнех илсе ҫитерет.

Эпĕ ялтан нихăҫан та уйрăлсах кайман. Хама ялти шăплăхра хуларинчен чылай аванрах туятăп, сăввăмсенчен ытларахăшне ялти шăплăхра ҫырнă, анчах та чылай ҫын унашкал пурăнаймасть, професси ирĕк памасть. Юлашки ҫулсенче чăвашсем хушшинче тивĕҫлĕ канăва тухсанах яла кайса пурăнăттăм тенисене илткелетĕп.

Апла-и, капла-и – тĕнче хуҫисем эпир мар, тĕнчи ҫапла аталанать.

***– Глобализм тапхăрĕнче «ăҫта лайăх, ҫавăнта ман кил» принциппа пурнакансем йышланса пынине пурте асăрхатпăр. Сирĕншĕн мĕн вăл – тăван кил, ҫуралнă кĕтес?***

– Эсир паракан ыйту хальхи саманашăн чи ыратуллă, чи ҫивĕччи пулас. Ĕлĕкрен пыракан пурнăҫ йĕрки улшăнчĕ. Маншăн вара паян кун та тĕнче варри Мускав мар, Упаҫырми. Ку пĕртте кулăшла мар: ҫуралнă кĕтесе юратмасăр чăн-чăн патриотизм та пулмасть. «Ăҫта укҫа, ҫавăнта тăван ҫĕршыв» текен каларăш вара хальтерех пулса кайрĕ, вăл шухăша капитализм идеологĕсем халăх асне пусахласах кĕртеҫҫĕ. Капитализма хăйĕн кăмăл-сипечĕпе, тымар ярса пурăнакан ҫынсем кирлĕ мар, ҫын хăй те тавар кăна.

***– Кулленхи пурнăҫра халăхăн – тĕрлĕ интерес. Пурте литературăпа кăсăкланмаҫҫĕ, поэзин асамлă йĕркисене ăса хывас, чун витĕр кăларас текенсен шучĕ тата сахалрах, ҫапах та вĕсем пур. Шел пулин те, чылай чух хаҫат-журналта, радиоэфирта чăн-чăн поэзи вырăнне рифмăланă пушă йĕркесемпе паллашма сĕнеҫҫĕ. Поэзин чăн тĕслĕхĕсене уйăрса илес шутлисене мĕнле сĕнӳ-канаш панă пулăттăр?***

– Кунта канаш пама ҫук пуль. Поэзин чăн тĕслĕхĕсене уйăрас шутлă ҫын вăл хăех уйăрса илет. Рифмăланă пушă йĕркесем вĕсем яланах нумайрах пулнă, уҫса пăхăр-ха 60–70-мĕш ҫулсенчи журналсене – маларах каланă пек, 90 проценчĕ идеологи, парти постановленийĕсене рифмăлани, ҫут малашлăха мухтани т. ыт. те.

Ҫынна шашкăлла выляма мĕншĕн чармалла? Сăмахпа выляма та чараймăн – выляччăрах.

Эпĕ кĕнекесен аннотацийĕсенче нихăҫан та чăваш халăхĕ валли тесе ҫырман, поэзие юратакансем валли тенĕ. Вĕсем вара яланах сахал пулнă, пур халăхăн та. Классиксен шутне кĕнĕ Афанасий Фет самаях ҫамрăк чухне 600 экземплярпа сăвă кĕнеки пичетлесе кăларнă, ăна вăл виличчен те сутса пĕтерейменн. Пушкин, Лермонтов вăхăтĕнче тата халăхĕ вулама-ҫырма та пĕлмен, анчах та чăн-чăн пултарулăх ҫыннисем литературăпа искусствăн малашлăхне, вилĕмсĕрлĕхне, кирлĕлĕхне шаннă, ҫавă вĕсене вăй-хăват парса тăнă та.

Халăх вăл ыйхă татсах пĕр-пĕр сериал курать, ҫывăрмасăрах Александр Блока вуланине асăрхаман. Ку ĕнтĕ халăха тиркени мар, халăх вăл хăй пурнăҫĕпе пурăнать. Йышра вара, Блок калашле, кам та пулин юрлакан тупăнатех. Итлекен те, тейĕттĕм хушса.

***– Иртнĕ ĕмĕрте чăваш литературинче сăвă вăйлă аталаннă, ҫӳллĕ шая ҫĕкленнĕ жанр шутланнă. Халĕ вара час-часах сăмах ăстисенченех пирĕн поэзи ҫăлкуҫĕ типсе пырать тенине илтме пулать. Ҫак шухăшпа килĕшетĕр-и? Килĕшетĕр пулсан ҫак пулăмăн сăлтавĕсем мĕнре-ши?***

– Чăнах та, иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш ҫулĕсем хыҫҫăн

чăваш поэзийĕ вăйлăн аталанса каять. Акă, хамран пĕр теçетке майлă аслăраххисенех илер: Геннадий Айхи, Энтип Ваççи, Николай Теветкел, Юрий Айташ, Вениамин Тимаков, Михаил Сениэль, Петĕр Эйзин т. ыт. те. Чылайăшĕ пирĕнтен уйрăлса кайрĕç пулин те, вĕсен сăввисем манăça тухмĕç. Манăн шухăшăмпа, çак поэтсен чи чаплă сăввисене пĕр çĕре пухса шкул ачисем валли антологи евĕрлĕ кĕнеке пичетлесе кăлармалла. Ку вара, эсир калашле, хальхи «пушă сăвăсене» хупласа хуни пулать те. Тен, Турă сывлăх парсассăн, вăхăт çитеркелесе, çак ĕçе хамах тăвăп.

Литературăпа искусство нихăçан та пĕр тикĕссĕн аталанман: пĕрре çĕкленнĕ, тепре анса кайнă. Хальхи саманара поэзи шайĕ (пĕтĕмĕшле – литература шайĕ) чакса кайнин сăлтавĕсем нумай: самани тăрук улшăнни, информаци революцийĕ, çыравçăсен пĕрлешĕвĕ арканни, массăллă искусствăпа шоу-бизнес хуçаланни т. ыт. те. Калăпăр, пултарулăх вучĕпе хыпнă çамрăк килет те – эстрадăна каять, тӳрех «поэт, композитор, юрăç» пулса тăрать. Эстрадăна эпĕ нихăçан та тиркемен, хальхи саманара вăл кирлĕ – эпĕ литературăпа искусство тĕсĕсене пăтраштарнине кăна яланах хирĕçленĕ. Халăхăн илемлĕ культурине тĕпчекенсем юлашки çулсенче эстрада текеннине хальхи фольклорăн пĕр сийĕ тесе хаклама сĕнеççĕ. Сăмах май каласан, Интернетра таса поэзипе интересленекенсем йышлансах пынă пек туйăнать, çамрăксем хайсен сăввисене кăларса хураççĕ, тĕрлĕ тавлашусем йĕркелеççĕ.

***– Тапхăрăн-тапхăрăн литераторсем хушшинче «халăх поэчĕ», «халăх çыравçи» ята кам тивĕçли çинчен тавлашу вăй илет. Хăшĕ-пĕри çак хисеплĕ ятсене Интернет урлă сасăлав йĕркелесе валеçме те сĕнет. Эп асăрханă тăрăх, чăннипех çак ята тивĕçлĕ çынсем тавлашăва хутшăнмаççĕ. Эсир мĕнле шутлатăр, çакнашкал ятсен сумĕ юлашки вăхăтра чакса пымасть-ши? Тата çыравçăн ăсталăх шайне вĕсем тăрăх хакламалла-ши?***

– Каçарăр та, мана ку ыйту нихăçан та кăсăклантарман. Ман шутпа, поэт тени хăех – чи сумлă та пархатарлă ят, чыс-хисепне вара влаçрисем мар, Парнас çинчисем параççĕ. Кам поэт, кам поэт мар – ăна вăхăт кăна татса пама пултарать.

***– Аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн Эсир ялти шкулта учительте ĕçленĕ, кайран чылай çул хушши студентсене университетра тата культура институтĕнче вĕрентрĕр. Вĕрентекен ĕçне хак парăр-ха тархасшăн. Паян кун ытла та йӳнелсе каймарĕ-ши вăл? Сирĕн вĕрентекенсем хушшинче асра юлнисем пур-и?***

– Вĕрентекенсем пирки нумай ырă сăмах калама пулать. И.А. Андреев, М.Р. Федотов, Н.П. Петров, Л.П. Сергеев профессорсене чылай вĕренекенĕ асран кăлармĕ, вĕсен пуçарăвĕсене малалла тăсĕ.

Учитель профессийĕ йӳнелсе пыни пирки вара МИХсенче кунĕн-çĕрĕн калаçаççĕ, манăн сăмах та хускатас килмест. Пирĕн ӳсĕм урăх саманара пурăннă, шкулта тата вузра ĕçленĕ вăхăтсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче эпир Макаренко, Сухомлинский идейисене тĕпе хывса ĕçленĕ. Тĕлĕнмелле чаплă педагогсем пулнă вĕсем! Çав педагогсен ăсталăхне алла илме тăрăшнăран пуль шкулта та, вузра та ачасемпе, çамрăксемпе ман нихăçан та нимĕнле конфликт та пулман. Уроксемпе занятисене кашни кунах хаваспах каяттăм. Анчах та вĕсен вĕрентĕвĕнчи никĕс – коллективизм, хальхи самана вара индивидуализма вĕрентме хистет. Хальхи шкул пурнăçне пĕлсех каймастăп, пĕлмен япала çинчен калаçмăп та. Пĕр япала кăна паллă: вĕрентекенĕн ачасемпе е студентсемпе ĕçлеме вăхăчĕ çук – çӳлерехри инстанцисем валли хут çырмалла. Çакă, ман шутпа, чи пысăк çитменлĕх.

***– Маларах поэзи куçарăвĕ пирки сăмах пуçарнăччĕ. Эсир хăвăр та пурнăçăн пĕр тапхăрне çавнашкал ĕçе халалларăр: Библи тексчĕсене чăвашла куçартăр. Çак пысăк та яваплă ĕç патне мĕн илсе пычĕ? Ăна вĕçленĕ хыççăн хăвăршăн мĕнле пĕтĕмлетӳсем турăр, мĕнле çĕнĕ пĕлӳпе пуйрăр?***

– Çĕнĕ пĕлӳ – хамăр айван пулнине ăнланса илни. Христианлăха тиркекенсем тупăнсах пыраççĕ, тавлашкалатăп та – пĕри те Библие тĕплĕн чĕре витĕр кăларман, турсăмахлăх (богослови) мĕнне те пĕлмест. Европăра, ав, малтанхи университетсем 600 çул ĕлĕкрех уçăлнă, унта турсăмахлăх тата латынь факультечĕсем тĕп вырăнта пулнă. Вăт халĕ шухăшласа пăхăр: Библи куçармалăх пĕлӳ çителĕклĕ-и пирĕн? Хальхи культурăпа цивилизаци христианлăх никĕсĕ çинче тăнине шута илсен, чăвашсем хăйсене христиансем теççĕ пулсан, çапах та куçару ĕçне тумах тивет. Телее, «Çĕнĕ Халал» кĕнекине хатĕрлес ĕçе чăн-чăн профессионалсем – Аристарх Димитриевпа Петĕр Эйзин – хутшăнчĕç. Эпир ĕнтĕ килте вуламалли текстсем хатĕрлерĕмĕр, мĕншĕн тесен чылайăшĕ чиркĕве çӳремест.

***– Петр Яковлевич, чăваш халăхĕ Сире ытларах поэт пек пĕлет. Çав вăхăтрах Эсир çур ĕмĕре яхăн чĕлхе тĕпчевçи пулса тăрăшатăр. Поэзи туйăм çинче никĕсленнĕ, тĕпчев ĕçĕсемшĕн ăстăн малта. Çак икĕ енлĕ туртăм пĕр çынра мĕнле пурăнма пултарать? Хăш ĕçне маларах хуратăр?***

– Çак икĕ енлĕ туртăм вăл пур çынра та пур, мĕншĕн тесен пуç мими икĕ çурчăмартан тăрать: пĕри – кăмăл-туйăмшăн яваплă, тепри ăс-хакăлшăн. Кунта пуç мимин икĕ пайĕ мĕнле шайлашăнса тăни çинчен калаçмалла. Пĕри кăмăл-туйăмпа пурăнать, тепри – шухăшпа. Вăл ĕнтĕ пирĕнтенех килмест пулмалла, çапла çуралнă та – пурăнас пулать. Шкулта чухнех мана математика та, литература та питĕ килĕшнĕ. Килĕшнĕ анчах мар, иккĕшĕнпе те питĕ лайăх «пиçетчĕ». Çапах та мăшăрăм, врач, хирĕлкеленĕ чухне: «Санăн икĕ полушарийĕ те тĕрĕс мар ĕçлет», – тет. Эпĕ унпа килĕшетĕп вара.

***– Пĕлетĕп, юбилея Эсир, ĕлĕкхилле каласан, ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илетĕр: çĕнĕ тĕпчев кĕнеки пичетрен тухмалла. Ун çинчен каласа памăр-ши?***

– Чăн та, сывăх вăхăтрах «Строй чувашского языка» ярăмра самаях пысăк калăпăшлă «Фонетика и фонология чувашского языка» монографи пичетленсе тухмалла. Ку тĕпчеве эпĕ пĕтĕмлетӳллĕ ĕç тесе хаклатăп. Кĕнекере чăваш фонетикин аталанăвне тĕплĕн тишкернĕ, чылай ыйтусене малтанхи хут е çĕнĕлле пăхса тухнă. Унăн малтанхи ансат вариантне эпĕ университетра студентсем валли «Чăваш фонетики» ятпа пичетленĕччĕ, кайран, эпĕ университетран кайсан, ăна иккĕмĕш кăларăмпа та кун çути кăтартнă. Халь пичет-

ленмелли монографи вара студентсемпе учительсене, учебниксем çыракансене – филологипе кăсăкланакансене пурне те – питĕ кирлĕ те усăллă пулмалла пек. Ун пирки ĕнтĕ кĕнеки пичетленсе тухсан калаçăпăр.

***– Тăван чĕлхемĕр шăпи çинчен ыйтмасăр чун чăтмасть. Чăваш чĕлхи хăй ĕмĕрĕнче тем те тӳссе ирттернĕ: усалли те пулнă, ырри те. Унăн паянхи тăрăмне Эсир епле хакланă пулăттăр? Чĕлхемĕре ирĕклĕн аталанма мĕн е кам чăрмантарать?***

– Тăван чĕлхемĕр шăпи пирки пурте кулянатпăр-ха. Кулянатпăр кăна мар, кашни хăй пултарнă таран ĕç тума тăрăшатпăр. Сăвă çырса кăна нихçан та пурăнман. Шкулта ачасене тăван чĕлхепе литература вĕрентрĕм, университетра 17 çул ĕçлерĕм, кадрсем хатĕрлес ĕçре самай вăй хутăмăр темелле. Шкулсемпе библиотекăсенче, хаçат-журналсенче, радио-телевиденире эпир хатĕрленĕ кадрсем пикенсех вăй хураççĕ (Олег Кульев та тахсан пирĕн студентчĕ). Шел пулин те, тăван чĕлхемĕр хулара кăна мар, ялта та хăйĕн функцийĕсене çухатсах пырать. Эпир ватăлтăмăр ĕнтĕ, çав чуна ыраттаракан йывăр ĕçе вĕренекенсем малалла тăсасса шанни кăна. Чăвашлăх пирки, тăван чĕлхемĕрĕн шăпи пирки манăн нумай сăвă çыраннă, унтан ытла нимĕнех те калаймăп.

***– Эсир чылай çамрăк чух çырнă пĕр сăвăра çакнашкал йĕркесем пур:***

**Эп вăхăт урапи çинче ларса пыратăп,**
**Çапать-и сивĕ е сиктеркелет,**
**Çук, найкăшмастăп, юрă эп юрлатăп:**
**Ман пурнăç юрттине мухтас килет.**

***Халĕ, çитмĕле çитсессĕн, çав туйăмсем сĕврĕлмерĕç-и? Пурнăç юрттине çавăн пекех мухтас килет-и?***

– Тӳрех каламалла, ĕмĕр тăршшĕнче çыраннă сăвăсенчен пĕринчен те тунмастăп, кашни йĕрки айне халĕ те алă пусма хатĕр. Этем утакан сукмак ырăпа усал хушшипе иртет. Эпĕ сăввăмсемпе пурнăçăма илемлетрĕм, тен, хам та лайăхлантăм. Найкăшакан, макăракан арçынна çынсем хисеплемеççĕ, уйрăмах – хĕрарăмсем (*Петр Яковлевич ку сăмахсем хыççăн кулать.*) Шӳтлемесĕр каласан, пурнăç вăл – кĕтрет, асамлăх. Пурнăçа хурла-хурла ху кăна хăрса каятăн. Çын тивĕçне тытса пырсан, паллах, пурăнмашкăн çăмăл мар, анчах пурнăçран хакли нимĕн те çук. Çĕр çинчи пурнăçра Турă этемшĕн вĕçĕ-хĕррисĕр, иксĕлми телей çулĕ палăртман çав. Юрать, çав чăнлăхсене çамрăк чухне пĕлмен, çитмĕл çулхи ăспа пурăнас пулсан ачалăхĕ те, çамрăклăхĕ те пулмĕччĕ. Айван пулнă, çавă паха. Халĕ, ватăлсан, кашни ирех вăранатăн та, чун савăнса каять: тул çутăлать. Тата тепĕр Çĕнĕ Кун пуçланать.

***– Сирĕнпе, Петр Яковлевич, калаçса тăранма çук, анчах та журнал страницисем шутлă. Тавах чунăра уçса панăшăн, мана та, вулакансене те çĕнĕ шухăшпа, çĕнĕ пĕлӳпе пуянлатнăшăн. Юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Таса сывлăхпа нумай çул хушши пире савăнтарса пурăнмалла пултăр!***

**Олег КУЛЬЕВ** *калаçнă*

*Вырăссен аслă поэчĕ С.А. Есенин çуралнăранпа 125 çул çитнĕ май*

# Пирĕншĕн тăван поэт пекех

Эпир çамрăк чухне вырăс поэзийĕ çинчен сăмах пуçарсан, чылайăшĕ чи малтан А.С. Пушкина, М.Ю. Лермонтова, С.А. Есенина аса илетчĕ. Халĕ те çавах. Паллах, ытти чаплă ятсем те темĕн чухлех. Ф.И. Тютчев, К.Д. Бальмонт, В.Я. Брюсов, А.А. Блок е тата ытти поэтсен сăввисене пĕтĕмпе тенĕ пек пăхмасăр калама пĕлекен çынсемпе те тĕл пулма леккеленĕ мана. Эпĕ, сăмахран, халь çурма манăçнă Н.А. Некрасов поэзине юрататăп. Шкулта ăна лайăх вĕрентнĕрен-ши? Çапах, каларăмăр ĕнтĕ, асăннă сăвăçсенчен виççĕшĕ пурин чĕлхи вĕçне те чи малтан килет.

Эпĕ кĕçĕнрех классенче вĕреннĕ чухне Сергей Есенина вулама юрасах кайман поэтсен шутĕнчен кăларма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ, çапах та шкул программине кĕртменччĕ-ха. Çавăнпа эпир ун сăввисене календарьсенче куркаласан çеç вуласа киленме пултарнă. «Черёмуха», «Пороша» сăввисем савăнтарнăччĕ. «Берёза» ятлине чăвашла та куçарнăччĕ эпĕ. «Нивы сжаты, рощи голы…» йĕркепе пуçланаканни вара мана, ял ачине, тăнран янăччĕ темелле. Мĕнле ăста çырнă ăна! Халь те тĕлĕнме пăрахаймастăп. Ун чухнех чăвашла куçарас килнĕччĕ – халăм çитмесрен шиклентĕм. Поэт çут çанталăк пулăмне йĕркипе тата яр-уççăн (пӳрнипе тĕллесе кăтартнă евĕр) сăнарлама пултарнă-çке. Сăввине аса илер-ха:

Нивы сжаты, рощи голы,
От воды туман и сырость.
Колесом за сини горы
Солнце тихое скатилось.

Дремлет взрытая дорога.
Ей сегодня примечталось,
Что совсем-совсем немного
Ждать зимы седой осталось.

Ах, и сам я в чаще звонкой
Увидал вчера в тумане:
Рыжий месяц жеребенком
Запрягался в наши сани.

Çакна çырнă чухне поэт çирĕм иккĕре пулнă. Тĕлĕнмелле: çав çула çитичченех вулакан чун-черине тыткăнлакан мĕн чухлĕ сăвă çырма ĕлкĕрнĕ вăл! Ĕмĕрĕ кĕске килессине сиснĕ-ши?

Сăвва кăштах тишкерер-ха. Тыр-пула пухса илнĕ ĕнтĕ, вăрман çаралнă. Хĕвел сăрт-ту хыçне мĕнлерех кусса каять? Кустăрма пек! Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен урапа-кустăрма вăхăчĕ иртнĕ ĕнтĕ. Путăк-лакăмлă çул та тунсăхлă, тĕлĕрсе шухăша кайнă. Вăл та часах хĕл çитессе сисет.

Малалла мĕн пулса иртет-ха? Поэт этем кăмăлĕ патне çавранса тухать: хĕрлĕ сарă уйăх ăна çуна-